Муркаш район хаҫачĕ

# Ҫĕнтерӳ ялавĕ

1944 ҫулхи майăн 5-мĕшĕнченпе тухать

67 (7598) № * Шăмат кун, 2008 ҫулхи сентябрĕн (авăн) 6-мĕшĕ * Хакĕ ирĕклĕ

**Нефтьпе газ промышленноҫĕнче ĕҫлекенсен кунĕ умĕн**



## Ыттисемшĕн тĕслĕх

*Эсир сăн ӳкерчĕкре куракан Александр Михайлович Андреев 12-мĕш ҫул «Чувашсетьгаз» уҫă акционерлă обществăн «Моргаушимежрайгаз» филиалĕнче юсавпа строительство тата монтаж участокĕн водитель-слесарĕнче ĕҫлет. Хушнă ĕҫе вăхăтра пурнăҫланипе тата шаннă ĕҫшĕн ответлăха туйнипе палăрса тăрать вăл. Ҫакнашкал тăрăшулăхшăн хастар ĕҫчен пĕрре мар хисепе тивĕҫнĕ. Ĕнер вара ăна Нефтьпе газ промышленноҫĕнче ĕҫлекенсен кунĕ ячĕпе филиалта газ отраслĕнче нумай ҫул тăрăшса ĕҫлесе пысăк ҫитĕнӳсем тунăшăн «Газпромрегионгаз»уҫă акционерлă обществăн Хисеп грамотипе наградăларĕҫ. Чăн-чăн уяв парни! Саламлатпăр ăна ҫак ӳсĕмпе.*

**А. БЕЛОВ сăн ӳкерчĕкĕ.**

**Вырма – 2008**

***Районти пĕрлешӳллĕ хуҫалăхсенче тĕш тырăпа пăрҫа йышши культурăсене вырса илессипе ĕҫсем епле пынине кăтартни (сентябрĕн 5-мĕшĕ тĕлне)***

**Колонкăсенче. 1. Вырса илнĕ (процентпа). 2. Тухăҫ (гектар пуҫне центнерпа).**

| | | |
|---|---|---|
| Е. Андреев яч. хис. | 96 | 19,4 |
| «Волга» | 60 | 17,8 |
| «Восток» | 100 | 23,7 |
| «Герой» | 91 | 25,0 |
| К. Иванов яч. хис. | 38 | 11,7 |
| Ильич яч. хис. | 89 | 25,0 |
| «ВТМ» | 34 | 20,0 |
| Ленин яч. хис. | 74 | 19,2 |
| «Лидер» | 100 | 16,0 |
| «Моргаушская» | 79 | 20,0 |
| «Оринино» | 100 | 18,0 |
| «Передовик» | 98 | 10,2 |
| «Свобода» | 93 | 28,9 |
| «Сеятель» | 100 | 15,6 |
| Суворов яч. хис. | 65 | 32,2 |
| «Рассвет» | 55 | 18,3 |
| «Ударник» | 92 | 30,0 |
| Чапаев яч. хис. | 54 | 21,7 |
| «Чемеево» | 91 | 15,7 |
| Чкалов яч. хис. | 91 | 31,7 |
| Мичурин яч. хис. | 9 | 18,0 |
| «Хлебороб» | 100 | 12,0 |
| **РАЙОНĔПЕ** | **81,2** | **23,3** |

**Райадминистрацире**

## Ĕҫре тăрăшуллă пулнăшăн

«Муркашри автомобильпе техника сервисĕ» уҫă акционер обществи ыйтнине тивĕҫтерсе, район администрацийĕн пуҫлăхĕн 2008 ҫулхи сентябрĕн 5-мĕшĕнчи 496 № йышăнăвĕпе район администрацийĕн Хисеп грамотипе наградăлама йышăннă:

– нумай ҫул хушши тăрăшса ĕҫленĕшĕн тата обществăлла ĕҫсене хастар хутшăннăшăн – **Павел Яковлевич ЯКОВЛЕВА**, «Муркашри автомобильпе техника сервисĕ» уҫă акционер обществин транспорт цехĕн водительне.

**Летчик-космонавта халалласа**



**СССР летчик-космонавчĕ, икĕ хут Совет Союзĕн Геройĕ А.Г. Николаевăн ҫуралнă кунне асăнса ирттерекен чупу республикипех йăлана кĕчĕ. Пирĕн район та, паллах, кунта хутшăнмасăр юлма пултараймасть. Сентябрĕн 4-5-мĕшĕсенче Муркаш районĕнчи шкул ачисем палăртнă маршрутсемпе черетлĕ пиллĕкмĕш чупăва хутшăнчĕҫ.**

**Сăн ӳкерчĕкре: старта тухма хатĕр.**

**Пĕрлешӳллĕ хуҫалăхсенче**

## Хуҫалăх экономикишĕн – пĕрлехи вăйпа

Выльăх-чĕрлĕх отраслĕ ҫĕр ĕҫченĕшĕн кулленхи укҫа ҫăл куҫĕ пулнине пурте пĕлетпĕр, анчах мĕнпе сывлаççĕ ҫак отрасльти ĕҫченсем, мĕнле тĕллевсемпе пурăнаççĕ – ку ыйтусем ҫине хуравĕ сахалрах та сахалрах. Иртен пуҫласа каҫчен тислĕк шывĕн шăршипе сывласа ҫак ĕҫре вăй хуракан тислĕк шăрши ҫапса лартнăран тăванĕ патне вăхăтра хăнана та каяймасть. Пурăнатпăр – алăк уҫсан курăнатпăр. Ҫапла каласа ĕшеннĕ хресчен каç пулттипе апат ҫимесĕр тенĕ пекех вырăн ҫине йăванать.

Ку вăл пĕтĕмĕшле ӳкерчĕк. Анчах ҫакнашкал лару-тăрура та ҫĕнĕлĕхсене пурнăҫа кĕртсе выльăх патĕнче ĕҫлекенсен пурнăҫне ырă енне улăштарма тăрăшакансем пур. Вĕсем патĕнче вара ĕç вăйĕ ҫитменни те питĕ ҫивĕч тăмасть. Вăл кун йĕркинче пулсан та ĕҫе пĕлсе йĕркелени ҫивĕчлĕхе айккинелле пăрса ярать.

Илер-ха ăратлă выльăх ĕрчетекен «Свобода» ял хуҫалăх производство кооперативне. Ĕç укçин тӳлевĕ тивĕçлĕ шайра пулни тата ĕçлекенсен ыйтăвĕсене хуҫалăх ертӳҫисем кая хăвармасăр татса пани выльăх-чĕрлĕх отрасльне аталану шайĕнчех тытса пыма пулăшать. Эсир хуҫалăхăн пĕрремĕш ĕне ферминче кĕтӳҫре ĕçлекенсене куратăр. Вĕсем (сулахайран сылтăмалла): Татьяна Трофимова, Светлана Чиновникова, Всеволод Степанов, Светлана Николаева. Вĕсем хăйсене шанса панă ĕҫе ответлăха туйса пурнăҫлани сăвăм виҫинче палăрать. Хуҫалăх паянхи кун икĕ ĕне ферминчи 291 ĕнерен талăксерен 3480 – 4000 килограмм сĕт суса сĕт заводне леҫет.



Ĕнесен продуктивлăхĕ ҫине вĕсен сывлăхĕпе кăсăкланса тăни те витĕм кӳрет. Кунта ветеринари ĕҫченĕсен тӳпи малти вырăнта. Хуҫалăхри 2-мĕш ĕне ферминчи ветфельдшер Галина Алексеевна Григорьева 30-мĕш ҫул ĕнтĕ Ҫатракассинчи ĕне ферминче выльăхсен сывлăхĕн хуралĕнче тăрать.

– Пирĕн таса продукци – сынсен ҫирĕп сывлăхĕ. Ҫакна шута хурса ĕҫлетпĕр. Ку тĕллевпех ветеринари ĕçĕсене те вăхăтра тума тăрăшатпăр, – терĕ вăл 31 ҫул каялла Чулхула облаҫĕнчи училищĕре ветеринара вĕреннĕ юлташĕнчен самантлăха уйрăлса.

Пĕрле вĕреннĕ юлташĕ вара – Луиза Германовна Федорова – паян Ильич яч. хис. ял хуҫалăх производство кооперативĕн Уйкас Янасалти ĕне ферминчи техник-осеменаторĕ. Иртнĕ ҫул вăл тăрăшнипе хуҫалăхра 100 ĕне пуҫне 89 пăру илнĕ.

Хăйсен пурнăҫне выльăх-чĕрлĕх отрасльне халалланă хĕрарăмсем иккĕшĕ те виҫшер ача ҫуратса пурнăҫ ҫулĕ ҫине кăларнă. «Ĕҫрен хăрамасан пурнăҫ ăнать», – терĕҫ туссем хăйсем йывăрлăха парăнма хăнăхманнине кăтартса.

**А. БЕЛОВ.**

**Автор сăн ӳкерчĕкĕ.**

**К сведению граждан района!**

Согласно решениям Собраний депутатов сельских поселений с 25 июля по18 августа 2008 года в населенных пунктах района прошли публичные слушания по проектам генеральных планов сельских поселений.

Жители населенных пунктов одобрили проекты генеральных планов с внесением дополнений и замечаний.

Подробнее с материалами публичных слушаний можно ознакомиться на сайте администрации Моргаушского района на банере «Схемы территориального планирования сельских поселений Моргаушского района» и в администрациях сельских поселений.

**Официально**

## В сегодняшнем номере - Приложения к райгазете

В Приложениях к Моргаушской районной газете от 6 сентября 2008 года печатаются:

- Решение Моргаушского районного Собрания депутатов № С-24/7 от 15 февраля 2008 года «О внесении изменений и дополнений в решение Моргаушского районного Собрания депутатов от 30.11.2007г. № С-22/3 «О районном бюджете Моргаушского района на 2008 год»;
- Решение Моргаушского районного Собрания депутатов № С-25/5 от 23 апреля 2008 года «О внесении изменений и дополнений в решение Моргаушского районного Собрания депутатов от 30.11.2007г. № С-22/3 «О районном бюджете Моргаушского района на 2008 год».

**Хушма вĕрентӳ ыйтăвĕсемпе**

## Сентябрьти экзаменсем



«Сывлăх» физкультурăпа спорт комплексĕнче вынаҫнă Муркашри ачапăча искусство шкулĕнче сентябрĕн 4-5 мĕшĕсенче кунта вĕренме кĕмелли экзаменсем иртрĕҫ. Чăннипех те хĕрӳ тапхăр пулчĕ ҫак кунсенче. Хушма вĕрентӳ шкулĕн директорĕ Г.М. Анисова кăҫал вĕренме кĕрес текенсем йышлă пулнине пĕлтерчĕ. Чи пултаруллисене, малалла шанчăк паракансене ҫеç вĕренме суйласа илнĕ.

Кунта ĕҫлекен преподавательсем каланă тăрăх искусство шкулĕнче вĕренес текенсем хушшинче хавшакрах сывлăхлă ачасем те сахал мар иккен. Ҫавăнпа та вĕсен сывлăхне ҫирĕплетес тĕллевпе шкулта ятарлă тепĕр ушкăн йĕркелессе пĕлтерчĕ Галина Михайловна. Ҫакăнпа пĕрлех вара ушкăнпа вĕренмелли уйрăмсене (тĕслĕхрен, хореографи уйрăмне) ачасене палăртнинчен ытларах илме май пулать.

Искусство шкулне вĕренме кĕрес текенсем ҫитес кунсенче те искусство шкулне килме пултараççĕ. Уйрăмах арҫын ачасене кĕтеççĕ шкулта. Чуна тыткăнлакан илемлĕ бал ташшисене вĕсемсĕр епле ташлăн-ха? Апла пулсан пултаруллă хĕр ачасемпе арҫын ачасем искусство шкулне вĕренме килме кая юлман. Талантлă педагогсем патĕнче вĕренни вара хăйĕн «ҫимĕҫне» вăраха ямасăрах парĕ, пурнăҫ тăршшĕпех усă кăтартса савăнтарĕ.

**Н. НИКОЛАЕВА.**



**Сăн ӳкерчĕксенче: Е.В. Николаева кашни сасăнах тимлĕ тĕрĕслет; О.В. Григорьева хореограф экзамена тивĕҫлипе ирттерет.**

**Автор сăн ӳкерчĕкĕсем.**

**Юбилей**

### *Саламлатпăр*

Хаклăран та хаклă, хĕвелтен те ăшăрах ҫыннăмăра - юратнă аннемĕре, хунямана, асанне-кукамая, мăн асаннепе кукамая – Мăн Хураҫкара пурăнакан **Римма Васильевна АГАТКИНАНА** пĕтĕм чун-чĕререн хисеплесе, ырлăх-сывлăх сунса пурнăҫĕнчи паллă кун ячĕпе – 70 ҫул тултарнă ятпа ăшшăн саламлатпăр. Вăрăм ĕмĕр, канлĕ ватлăх, ҫирĕп сывлăх, телей сунатпăр.

**Саламлаканĕсем: хĕрĕсем, ывăлĕсем, кинĕ, кĕрĕвĕсем, аслă тата кĕҫĕн мăнукĕсем, хăтипе тăхлачисем, ҫывăх тăванĕсемпе ял-йыш.**

Ҫитес ҫул валли ҫырăнтараççĕ

***Районти «Ҫĕнтерӳ ялавĕ» хаҫата 2009 ҫулхи пĕрремĕш ҫур ҫулта илсе тăма ҫырăнтараççĕ. Ултă уйăха ҫырăнса илмелли хак – 191 тенкĕ 70 пус.***

**Райхаҫат редакцийĕ.**